Ял тăрăхĕсен кунĕсенчен

Ыйтусем пур-ха. Ĕçлес пулать

Иртнĕ юн кун Москакасси ял тăрăхĕн кунне хутшăнакансем те хăйсен ĕçне вырăнти предприятисемпе организацисенче пулнинчен пуçларĕç. Кунта ирĕксĕрех пуçа çакăн пек шухăш пырса кĕрет: чăннипех те телейлех ку тăрăхра пурăнакансем. Мĕншĕн-и? Ак, хăш енчен. Асăннă ял тăрăхĕн территорийĕнче суту-илӳ точкисем те, промышленность предприятийĕсем те, пĕчĕк бизнес объекчĕсем те çителĕклех. Ку вара мĕн çинчен калать? Çывăхри ялсенче пурăнакансем аякка каймасăрах япăх мар ĕçлесе илме пултараççĕ.

Пĕр “Сеспель” чикĕллĕ яваплăхлă обществăнах илер –ха. Иртнĕ çул вăл пĕтĕмпе 258 миллион çурăна яхăн суммăлăх продукци кăларса реализациленĕ. Ку вăл виçĕмçулхинчен 161, 5 процент чухлĕ нумайрах пулать. 216 çынран тăракан коллектив çăнăх, цемент турттармалли пичĕкесем кăларать. Виçĕмçул асăннă предприяти пурĕ 112 çакнашкал пичĕке кăларнă пулсан, иртнĕ çул вĕсен шучĕ 222 çитнĕ. Ку вăл тимĕртен хатĕрленисем. Унсăр пуçне 2006 çулта кунта 16 метр тăршшĕ 35 тонна турттаракан çак пичĕкесене алюминирен те хатĕрлеме пуçларĕç. Пĕтĕмпе иртнĕ çул кун йышшисене çӳлерех асăннă шутсăр пуçне 4 турĕç.

Çавăн пекех çак пичĕкесене, сывлăш пусăмне памалли компрессорсене те “Сеспельтех” хатĕрлеççĕ. Вĕсен хакĕ те туянмалласкерех. Красногорск хулинче кăларнисене 120 пин тенкĕсĕр туянма çук пулсан, Муркашсен пахалăхлă продукцине 45 пинпех туянма пулать.

Кăçалхи тĕллевсем вĕсен тата пысăкрах. Предприятин тĕп инженерĕ В.А. Бирюков пĕлтернĕ тăрăх, уйăхне заказпа 23-25 пичĕке тата 50 компрессор кăлармалла.

Ĕçе 2 сменăпа йĕркелени (3 сменăпа ĕçлекенсем те пур), дисциплина çирĕппи - производство тухăçлăхĕн çулйĕрĕсенчен пĕрисем. Вăтам ĕç укçи кунта уйăхне 7 пин тенкĕ пулсассăн, сварщиксен вăл 12-14 пинпе танлашать.

Кăçал асăннă предприятире тата тепĕр 100 ĕç вырăнĕ тупăнмалла. Халь тăвакан кăçал хута яма палăртнă 80 тăваткал метр чухлĕ çĕнĕ ангарта шăпах çакăн чухлĕ çын ĕçлеме пуçлĕ. Çавăнпа та предприяти ертӳçисем районти шкулсемпе те тачă çыхăнса ĕçлеме тĕллев лартнă. Мĕншĕн тесен ют çĕршывра туса кăларакан оборудованисем йăлтах компьютерпа йĕркелесе пымалласкерсем. Апла пулсассăн, специалистсем кирлĕ пулаççĕ кунта малашне.

Палăртмалла, “Сеспельсем” кăларакан продукцие Белоруссире, Казахстанра тата ытти çĕршывсенче хаваспах туянаççĕ. Тавар туянакансене тупма вара вĕсене хăйсем тĕрлĕ çĕршывсенчи куравсене хутшăнни пулăшать. Иртнĕ çул вĕсем хăйсен продукцине Швецире, Германире кăтартрĕç. Паян, акă, шăпах “Сеспель” заказпа килĕшӳллĕн пĕр алюмини тата пĕр тимĕр пичĕкене заказчиксем патне ăсатать.

Йĕркеллĕ ĕçлекен коллективра ыйтусем те пулмарĕç. Пельмен хатĕрлекен “Сежина” цехра ĕçлекенсене вара ĕç укçи 3 пин тенкĕ пулни çителĕксĕр туйăнни палăрчĕ. Кунсăр пуçне вĕсене ĕçе çӳренĕ чух Анаткас Хачăк патĕнче автобуссем чарăнманни пăшăрхантарать иккен. Ирхи 7 сехет çурăсенче Муркаш - Мăн Сĕнтĕр автобусăн хушма рейсĕ вырăнлăрах пулмалла.

Пельмен тата ашран ытти продукци (пĕтĕмпе 63 тĕрлĕ продукци хатĕрлеççĕ “Сежинăра”) хатĕрлекенсемпе танлаштарсан, “Передовик” хуçалăхăн выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсен вĕсене ăмсанмалли çеç юлать. 2 пин тенке те çитеймен ĕç укçине те вĕсем 3 уйăх алла илмен-ха.

-Хăть расчет хутне курасчĕ, - пăшăрханаççĕ Ивановкăри ĕне сăвакансем. Фермăри шыв насусĕ ĕçлеменнишĕн те ферма ĕçченĕсене вĕсен ĕç укçинчен пĕр пин тенкĕ ытла тытса юлса наказани пани тата саккунпа килĕшӳллех-ши? Рыккакассисемпе Ивановкăсем, ферма ĕçченĕсем, иртнĕ çулшăн условисемпе пăхса хăварнă пек тырă та илеймен иккен-ха. Кĕскен каласан, хавхаланса ĕçлемелли майсем çуках кунта.

Апла пулин те ферма ĕçченĕсем хăйсен проблемисемпе çеç лăпланса ларман. Ахмане çăви патне çул çукки те пăшăрхантарать вĕсене. Асăннă ялпа Хачăк салин масарĕсен картисене те улăштарма вăхăт çитнĕ.

Культура ĕçченĕсемпе вĕрентекенсене те хумхантаракан ыйтусем çук мар. Рыккакассинчи клубра çамрăксене уявсем ирттерме магнитофон та çук. Ахманери клуб малтан чиркӳ пулнăран, халăх кăмăлне шута илсе, кунта кĕлĕ çуртне тума палăртаççĕ.

Асăрхарăр пулĕ, халăха хумхантаракан ыйтусем çук мар. Ял тăрăхĕсен кунĕсем иртнĕ май пур ял тăрăхĕнче пурăнакансем те Муркаш “калаçма” пăрахни хытах пăшăрхантарни палăрчĕ. Москакасси тăрăхĕнче пурăнакансем те радиопа паракан хыпарсене çу кунĕсенчех лини татма пуçланăран итлеме пăрахнă. Çавăнпах ĕнтĕ чылай ватăна çакă пырса тиврĕ. Уйрăм çăмăллăхсене тивĕçекенсем социаллă пакет вырăнне укçа илес тесен иртнĕ çул октябрĕн 1-мĕшĕччен РФ ПФ пирĕн районти управленине заявлени пырса памаллине, çак ĕçе кашни çулах тумаллине илтмесĕрех юлнă, пенси çапла майпа “пĕчĕкленни” пăшăрхантарать вĕсене. Хăйсен ыйтăвĕсемпе пыракансем тата ытти ыйтусене те хускатрĕç.

Ял тăрăхĕн кунне пĕтĕмлетнĕ май ял тăрăхĕн пуçлăхĕ М. М. Пушкин палăртнă пур çитменлĕхне те шута илсе ĕçлемеллине палăртрĕ. Ăна шанмасăр тăма вара нимĕнле сăлтав та çук. Асăннă ял тăрăхĕ пĕтĕмĕшле япăх мар ĕçлесе пырать. Районти экономикăпа социаллă аталану ăмăртăвĕнче иртнĕ çулхи пĕрремĕш çур çулта Москакассисем ял тăрăхĕсенчен 1-мĕш вырăн йышăнчĕç. Хăйсен бюджетне йĕркеленĕ хыççăн ку ял тăрăхĕнче перекет ыйтăвĕ çине те яваплăрах пăхма пуçларĕç. Ялсенче урамсене электроçутă парса тăрассине счетчикпе шутлама пуçларĕç. Ахманепе Ситуккассинче старостăсем çаврăнăçуллăрах пулчĕç ку тĕлĕшпе. Ку ĕç Ахманепе Рыккакассинче те пырать. Уйкас Хачăксем те счетчик туяннă. Апла пулсан тĕл пулура ку ялта пурăнакансем хускатнă урамра çутă çук ыйту малашне таталĕ.

ЧР Президенчĕн ялсем патне асфальт çул илсе пырас ĕçе хăвăртлатма хушакан Указне пурнăçлассипе те Москакассисем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Çапла майпа Максикасси, Уйкас Хачăк, Эхветкасси, Мăрсак ялĕсенче пурăнакансем те шăкăлт-шăкăлт пушмакпах тухĕç Муркаша кайма трасса çине малашне. Михаил Михайлович Кӳкеçри ПМК строителĕсем ĕçленипе кăмăллă.

Кĕскен каласан, малаллах талпăнаççĕ Москакассисем. Пурăнакан ялан малаллах пăхать вĕт. Йывăрлăхсене татса парса хăйĕн çулне уçсах пырать. Ку тăрăхра пурăнакансем те çаплах. Проблемăсем? Камăн çук вĕсем. Москакассисен те ăнăçсăр çемьесемпе те, килте эрех сутса кӳрше-арша хур кӳрекенсемпе кĕрешес ĕçе те вăйлатмалла тата ытти те. Иртнĕ çул вĕсем ĕçлеме пултарнине çирĕплетсе пачĕ пулсан, кăçал Москакассисем тата тăрăшарах ĕçлессе те шанас килет.

Л. ПАВЛОВА.

Лайăххине, ыррине çул памалла

Ятарлă графикпа килĕшӳллĕн январĕн 24-мĕшĕнче Катькас ял тăрăхĕн кунĕ пулса иртрĕ. Вăл ытти тăрăхрисем пекех пулчĕ. Район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем хутшăнчĕç. Ушкăнсем çине пайланса «Колос» хуçалăхра, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, вĕрентӳ, культура, сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче тата ăнăçсăр çемьесенче пулчĕç. Вырăнти лару-тăрупа паллашрĕç. Çав вăхăтрах ответлă ĕçченсем ял тăрăхĕнче пурăнакан çынсене хумхантаракан ыйтусемпе йышăнчĕç. Интереслентерекенни-кăсăк-

лантараканни чылай пулни палăрчĕ, килекенсен хисепĕ те сахалах пулмарĕ.

Ял тăрăхĕнче икĕ ял хуçалăх предприятийĕ вырнаçнă. Пĕри «Колос» хуçалăх (маларах ăна «Гигант» совхоз тесен пĕлеттĕмĕрччĕ), тепри рынок тапхăрĕнче çирĕппĕн утса пыракан «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики. Иккĕшĕн аталанăвне танлаштарас пулсан çĕрпе пĕлĕт хушшинчи пек уйрăмлăх палăрать.

Эпир чи малтан «Колос» хуçалăхăн сысна фермине çитсе куртăмăр, кунти ĕç-хĕлпе интереслентĕмĕр. Сарай пысăк, анчах сыснасен шучĕ питĕ сахал. Шалта сивĕ, пĕчĕк çурасемшĕн пушшех те. Хĕл кунĕ вара сивĕсĕрех иртмĕ. Çурма пушă сарай юсав ĕçне тимлесех ыйтни курăнать. Хĕлле урапа хатĕрле, çулла – çуна, тени кунта ытларах палăрчĕ. Фермăра ĕçлекенсен кăмăлĕсем те пусăрăнчăкчĕ. Шыв витресемпе çĕклеççĕ. Ĕç укçи вара 1 пин тенкĕне çитеймест. «Эпир нумай ыйтмастпăр, 1200 тенкĕ пулсан тем пекехчĕ. Ниçта та каяймастпăр, ăçта та пулин ĕçлемеллех. Ӳркенместпĕр, сыснасен йышне пысăклатсан питĕ лайăхчĕ», - терĕç пăшăрханса кунта тăрăшакансем. Çакăнта 8 çын вăй хурать.

Хыççăн А.А. Отенов хуçалăхран арендăна илнĕ мăйракаллă шултра выльăх фермине çитсе куртăмăр. Кунта 8 çын ĕçлет, сумалли ĕнесен хисепĕ 60. Уйăхсерен тӳлекен ĕç укçин калăпăшĕ 2-3 пин тенкĕ. «Эпĕ çак пуçарăва фермăна тата ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварас тесе тытăнтăм. Пуçăнни март уйăхĕнче 1 çул пулать, хальлĕхе тупăшне сисеймерĕм-ха», - терĕ фермер.

Хуçалăхри сыснасемпе мăйракаллă шултра выльăхсен йышне 60 процент чакарнă. Кунта ĕçлекенсем 77-ĕн. Вĕсен вăтам ĕç укçи 1117 тенкĕпе танлашать, 2005 çулта çак кăтарту 1471 тенкĕ пулнă.

Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем кашни гектартан вăтам виçепе 8,9 центнер тухнă. Çав хушăрах малта пыракан хуçалăхсенче ку кăтарту 25 центнерпа танлашать. Çакăнтан вара районти вăтам кăтарту (16,6) мĕншĕн пĕчĕкленсе кайнин тупсăмне çийĕнчех тупма пулать. Кĕрхи культурăсене пачах акса хăварман. Вырма тапхăрĕнче хуçалăх уй-хирĕнче хыт-хура ӳсетчĕ. Унпа юнашар пĕр шит çӳллĕш туна çинче 4 пĕрчĕллĕ пучах кичеммĕн сулланатчĕ. Ку хуçалăхри нихăш отрасльте те çĕнĕ технологи витĕмĕ сисĕнмерĕ. Е тĕпсĕр çырма хĕрне çитнĕ теме пулать «Колос» хуçалăха.

Пĕтĕмлетӳ пухăвне ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Г. Лебедев уçрĕ, лару-тăрупа паллаштарчĕ. Ял тăрăхĕ, ыттисемпе танлаштарсан, самай пысăк, 12 яла пĕрлештерет, 2837 çын пурăнать. Демографи кăтартăвĕсем япăхрах. 17 (26) ача кун çути курнă, 60 (55) çын çут тĕнчерен уйрăлнă.

Хушма хуçалăха аталантарма 13646,4 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ. Унпа 95 хуçалăх усă курнă. 2 çемье çурт-йĕр çавăрма каялла тавăрса памалла мар субсидие тивĕç пулнă. Шомик ялĕнче «Согласие» кредит кооперативĕ йĕркеленĕ.

Ял тăрăхĕнче иртнĕ çул 6 пушар пулнă, 79595 тенкĕлĕх сиен кӳнĕ. Кунта тĕп сăлтав – «Колос» хуçалăх пушар машинипе водителĕн ĕçне йĕркелесе ярайманни. Халĕ ку ĕçе А. Портнов предпринимателе шанса панă, машина юсав хыççăн ĕçе тухма хатĕр. «Алый парус» лагерь ăшă гаражпа тивĕçтернĕ. Пысăк ыйтăва татса пама пултарнă.

Преступленисен хисепĕ те савăнмаллиех мар, 63-рен (2005) 65-е (2006) çити ӳснĕ. Çын пурлăхне вăрласси, хапсăнасси уйрăмах пысăк - 42. Çавăнпа та профилактика ĕçĕ ытлашши пулмĕ. Çитес вăхăтрах милицин участокри инспекторĕ Е.А. Пугачев ырă улшăнусем пуласса шантарчĕ. Ытти ял тăрăхĕсенчи пекех, килте саккуна пăсса спирт пур шĕвеке сутакансем пирки çивĕч ыйту тăчĕ.

Н.Г. Ванеркин, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳçи, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, вырăнти чылай ыйтăва çĕклерĕ. Унăн ĕçĕпе вырăнти ял çыннисем питĕ кăмăллă. Фабрикăра ĕçлекенсен хисепĕ 213 çынпа танлашать. Уйăхсерен тӳлекен ĕç укçин калăпăшĕ 5989 тенкĕ.

Ял тăрăхĕн территорийĕнче вĕрентӳ, культура, сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем сахал. Çул-йĕр те хăй патне тăтăшах тимлĕх ыйтать. Кашни çĕрех пысăк тӳпе хывать Н.Г. Ванеркин, укçан пулăшать е ытти майпа. Ку çеç те мар, вырăнти тата районти чылай мероприяти вăл пулăшнипе пулса иртет. Акă, районти тăлăх ачасен елкине те пысăк тимлĕх уйăрчĕ. Çавна тĕпе хурса район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Николай Григорьевича Тав çырăвĕ парса чысларĕ. Çавăн пекех ыттисем те ăшă сăмахсем каларĕç.

Катькас ял тăрăхĕн кунĕн итогĕсене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пĕтĕмлетрĕ. Малашне туса ирттермелли тата çитменлĕхсем çинче чарăнчĕ.

Пурнăç хăвăрт улшăнса пынă май, çĕнĕлĕхсене ĕлкĕрсе пыма та йывăр. Çакă тӳлевсĕр эмелсем илес тата ытти медицина ыйтăвĕсене те аякка тăратса хăвармасть. Кун пирки Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, район больницин тĕп врачĕ В.Г. Данилов тулли хурав пачĕ.

Çавăн пекех чиркӳ, музей, çул-йĕр тăвас ыйтусем хĕрӳ калаçу çуратрĕç. Ырă йăлайĕркене упрас, тăсас ĕçре О.В. Тямина тăрăшать. Вăлах ветерансен канашĕн ертӳçинче те вăй хурать.

Пĕтĕмĕшле вара Катькас ял тăрăхĕ тăрăшать. Çине тăрса ĕçлесен çитменлĕхсем татах та сахалланĕç. Çакăн пек мероприятисене йĕркелени питĕ вырăнлине палăртрĕç. Вырăнсенчи ĕç-хĕлпе маларах интересленнĕ пулсан, тен, «Гигант» хуçалăх та пулнă пулĕччĕ, - терĕç пухăннисем.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре, тĕл пулу саманчĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Халăха канăç паман сăлтавсем çук мар

Паян кам та пулин пĕр шухăшсăр, татса паман ыйтусăр пурăнать-ши? Çук пулĕ. Кирек епле предприятинче те, ял тăрăхĕнче те çаплах вăл. Шутласассăн, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ районта нумай ырă пуçарупа палăрса тăрать. Юлашки çулсенче кунта çине-çинех тĕплĕ юсав тунă çуртсенче культура вучахĕсем хута кайрĕç. Виçĕмçул Шупуçĕнче 100 çул ларнă кив çурта ним мар чун кĕртрĕç, клуб уçрĕç. Пĕлтĕр Мăн Сĕнтĕрти кивĕ почта çурчĕ Вомпăкассине куçса тумтирне çеç мар, кăмăл-сипетне те улăштарчĕ те пĕр харăсах клуб, библиотека, фельдшерпа акушер пункчĕ хăйсен алăкĕсене уçрĕç. Мăн Сĕнтĕрти Культура çурчĕ те, чиркӳ çуртĕнчен тухса, урăх çурта вырнаçрĕ. Мăн Хураçкари клуба юсаса кĕчĕç.

Ку территоринче вырнаçнă предприятисем те çултан çухалса кайнăскерсем мар. “Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприяти” МУП та, çăкăр завочĕ те ура çинче çирĕп тăраççĕ. Пурнăçра тĕл пулакан пăтăрмахсем вара вĕсенче ĕçлекенсене те айккине тăратса хăварманни ял тăрăхĕн кунĕнче те палăрчĕ.

Çакă савăнтарать, çынсем йĕри-таврари проблемăсене курмăш пулмаççĕ пулсан, пурăнатпăр-ха, малаллах каятпăр. Йывăртарах ыйтăвĕсене те, ав, ял тăрăхĕсен кунĕсенче пĕрлех шыратпăр.

“Сундырь-Хлеб” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра ыйту ĕçлекенсен шывпа усă курассипе тата уншăн тӳлессипе çыхăннă. Телефон çыхăнăвĕ япăххи те пулкалать кунта. Парк урамĕнчи çуртра, ав, урама электричествăпа çутатас системăна подъездра çутă парассипе çыхăнтарнине пула подъездпа пĕрлех кунĕпех урамра та лампочкăсем çунаççĕ-мĕн. Ку вара уйрăм çынсем хăйсем çинчен çеç шутлани пирки калать пулĕ. Е тата çӳп-çап тултармалли ещĕксенчен ăпăр-тапăр урамĕпех сапаланса выртать текен шухăша илер. Районĕпе пĕртенпĕр çакнашкал машинăна ахаль те çăмăл мар пулĕ. Хамăрăн çуртсен умĕсене вара хамăр “тăрăшнипех” тата та илемсĕрлететпĕр. Юр лариччен унта мĕн кăна чыхмастпăр. Йывăç туратинчен пуçласа йăран çинчи çум курăк таранах. Мăнсĕнтĕрсене тата харпăр хăй çурчĕсенче пурăнакансем нумай хваттерлĕ çурт умĕнчи çӳп-çап савăчĕсене çапла майпа тултарса лартни тарăхтарать.

-Радиоприемниксемпе ирçесене те итлетпĕр, Етĕрне районĕ калаçни те хăлхана кĕрет. Мĕншĕн Муркаш калаçмасть,- алăкран кĕнĕкĕмен “çулса” илчĕç Мăн Хураçка клубне пуçтарăнакансем. Пралукпа килекен радиовещание пĕтерни “ВолгаТелеком” акционерсен усă обществинчен килни, ку ыйтăва районта куçран вĕçертменни пирки ăнлантарма тиврĕ. Харпăр хăй ыйтăвĕсемпе те кунта çынсем сахал мар килнĕ. Ял тăрăхĕн кунне ирттерме килнисемпе тĕл пулма вара клуба халăх лăках тулчĕ.

Чун ыратăвĕн сăлтавĕсем вара пухăннисен кашнин тĕрлĕрен. Шкул директорне кунта ачасене хушма пĕлӳ парас ыйту кирлĕ пек пулса пыманни шухăшлаттарать, мĕншĕн тесен район чиккинче вырнаçнă яла специалистсем килесшĕн мар. Çапах та пур вăйпах кунта ачасене ташлама, ӳкерме, ал ĕçне вĕрентеççĕ. Япăхах та мар. Çакă тĕл пулу хыççăн Мăн Хураçка шкулĕнче вĕренекенсем лартнă концертран та яр уççăн курăнчĕ. Вырăнта ĕç çукран халăх Мускава ĕçлеме кайма вĕренчĕ. Çынсен пурнăç шайĕ хăпарни палăрать. Çакна вĕрентекенсем ачасен килĕсене тухса çӳрени те кăтартса парать.

Ача сачĕн ертӳçине çивитти юхăнни канăç памасть. Ятарлă специалистсем çуккипе ачасене юрлама вĕрентессинче те, акăлчан чĕлхине хăнăхтарассинче те чăрмавсем пысăк.

Фельдшерпа акушер пункчĕн “хуçи” те пĕччен ĕçлесе çитермелле маррине палăртрĕ. Пур физиотерапи пӳлĕмĕсене çĕнĕрен ĕçлеттерме пуçласан аякри ялăн пĕр тĕп – сывлăха сыхлас проблемине татса пама пулĕччĕ.

Тĕл пулура хуçалăх пуласлăхĕ пирки çивĕч калаçу пулчĕ. Район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов, малтанхипе танлаштарсан, кунта ĕç-пуç кăшт лайăхланнине палăртрĕ. Хуçалăх панкрута тухакансен списокĕнче тăнă май, унăн пуласлăхĕ конкурс управляющийĕ ĕçе епле йĕркеленинчен нумай килет.

-Тĕллев – ял хуçалăхне пĕтермелле мар. Асăннă территоринчи çĕрсенчен 40 процент ытла – усă курман çĕрсем. Халăхăн активлă пулмалла. Вырăнта ял хуçалăх кооперативне йĕркелеме тăрăшмалла, - терĕ Юрий Александрович.

Аякри ял проблемисемпе пĕрлех хумхантаракан пĕрлехи тепĕр ыйту вăл – Мăн Хураçкана каякан çула юсасси. Ку таранччен вăл республика çулĕ шутланнă. Халĕ хамăр район çине куçнă май ăна кăçал йĕркеллĕ тума пуçлама палăртаççĕ.

Нумай ыйту пулчĕ тĕл пулура. Кашнин çине тенĕ пекех тулли хуравсем илчĕç пуçтарăннисем. Каярахпа татса памаллисене те палăртрĕç.

Çапах та çакна палăртмасăр тăма çук. Нумай ял тăрăхĕнче пулнă май, акă, мĕн курăнать: çав кирлĕ, ку кирлĕ. Вырăнта туса пама май пуррисене вырăнтах ял тăрăхĕпе пĕрле халăх таттса пама пултармалла ыйтусем те йышлă. Мăн Хураçкари чиркĕве юсама,тен, вырăнти предприятисем пулăшĕç. Муркашри чиркĕве те халăх вăйĕпех тăваççĕ. Вăл е ку объекта тăвассине юсассинче вара Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн те, унăн пуçлăхĕн те опыт пысăк. Ĕçленине кура – чысĕ те. Асăннă ял тăрăхĕ иртнĕ çул экономикăпа социаллă аталану ăмăртăвĕнче 1 çур çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе ял тăрăхĕсем хушшинче 3 вырăн йышăнни те çакăн çинченех калать пуль: Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче ĕçлеме пултаракансем пурăнаççĕ, çынсен вăл е ку ыйтăва татса панă чух “Маншăн ик айкки те – тăвайкки”,- темелле мар çеç. Вара ял хуçалăхĕнче те, ытти енĕпе те йывăрлăхсем кăшт сахалланĕччĕç.

Л.ТУКТИНА.